2007 çул – Ача çулталăкĕ

# Ачана çемьене пурăнма илес тетĕр-и?

*Тăван кил. Кашни çыннăн пурнăçĕнче вăл ĕмĕрлĕхех тарăн йĕр хăварать. Манăçми ырă та тарăн асилӳсем. Никам ăнланмасан та, тăван килте тăван аттепе анне сана ăнланаççĕ, каçараççĕ, йывăрлăхра пулăшаççĕ, умри тĕллеве пурнăçлама вăй-хал параççĕ.*

*Шел пулин те, кашни çынах туяймасть çав тăван кил ăшшине, аттепе анне юратăвне. Иртнĕ çул кăна акă 10 ачашăн интернат хăйĕн алăкĕсене уçрĕ, тăван ашшĕ-амăшĕ сывă çĕртех. Çав шутран 6-шĕ – пирĕн районти ачасем мар. Тăван ашшĕсемпе амăшĕсем пирĕн районти яваплăха туйман пĕлĕшĕсем патне пăрахса хăварнă хыççăн илсе çитерчĕ вĕсене шăпа интернатсене. Пĕр-пĕр çемьене пурăнма илнĕ пулсан çак ачасене вĕсем интернат мĕнне те пĕлмен пулĕччĕç.*

*Телее, тĕнчере ырă çынсем ытларах çав. Паян районта тăвансен ачисене опекăна илнĕ çемьесем те сахал мар. Ачана усрава илнисем те çук мар. 1996 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен Çемье кодексĕпе килĕшӳллĕн пирĕн пурнăçа çĕнĕ ăнлав килсе кĕчĕ, “ачана пурăнма илнĕ çемье”(приемная семья). Иртнĕ çул вара пирĕн районта та çакăн пек пĕр çемье çуралчĕ.*

*Мĕнле çемье вăл ачана пурăнма илнĕ çемье? Мĕнпе уйрăлса тăрать ачана опекăна тата усрава илнĕ çемьесенчен? Çак тата çакăнпа çыхăннă ытти ыйтусем тавра калаçрăмăр та ĕнтĕ эпир районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачалăха сыхлассипе ĕçлекен тĕп специалисчĕпе И.С. КАБУРКИНАПА. Акă мĕнле хуравларĕ вăл пĕрремĕш ыйту çине:*

– Ачана пурăнма илнĕ çемье опека органĕпе ачана пурăнма илнĕ ашшĕпе амăшĕ хушшинче тунă килĕшӳ çинче йĕркеленет. Çемьене усрама илекен ачана валли апат-çимĕç, тумтир, атă-пушмак, çемçе инвентарь туянма патшалăх укçа-тенкĕ уйăрать. Çавăн пекех ачана çемьене пурăнма илекен ашшĕне е амăшне ĕç укçи тӳлеççĕ. Вăл мĕн чухлĕ пуласси çемьене миçе ачана пурăнма илнинчен килет. Çавăн пекех – çемьене пурăнма илекен ача чирлĕ е сывă пулнинчен те.

**– Ираида Семеновна, вулакансене ăнланмаллarах пултăр тесен ачана çемьене пурăнма илекен çемьен уйрăмлăхĕ çинче чарăнса тăни вырăнлă пулĕ. Тĕслĕхрен, мĕнпе уйрăлса тăрать вăл ачана усрава илнĕ çемьесенчен?**

– Ачана усрава илсен, ачан ятне, хушаматне, ашшĕ ятне улăштарма юрать. Çавăн пекех – хăçан çуралнине те, ăçта çуралнине те. Ачана усрава илекенсене усрава илекен ачасен ашшĕ-амăшĕ пулать, тесе çыраççĕ.

Ачана çемьене пурăнма илнĕ чух вара нимĕн те улăштармаççĕ: ятне те, хушаматне те, ыттине те. Усрава илнĕ ачасем вĕсене илнĕ ашшĕ-амăшĕшĕн хăйсен ачисем шутланаççĕ. Çавăнпа та хăйсем çуратнă ачашăн мĕнле çăмăллăхсем парать патшалăх ашшĕ-амăшĕсене, усрава илнĕ ачасем те çав çăмăллăхсене тивĕçеççĕ.

**– Ачана çемьене пурăнма илекен çемье ачана опекăна илекен çемьерен мĕнпе уйрăлса тăрать?**

– Çемьене пурăнма ют ачасене илеççĕ. Опекăна вара тăвансен ачисене параççĕ. Опекăна илнĕ ачасене валли те патшалăх апат-çимĕç, тумтир, атă-пушмак, çемçе инвентарь туянма ятарласа укçа-тенкĕ уйăрать. Çемьене пурăнма илекен ачасемшĕн панă пекех. Анчах та ачасене опекăна илекенсене патшалăх ĕç укçи тӳлемест.

**– Ачана çемьене пурăнма кашни çынах илеймест пулĕ-ха?**

– Чи малтанах пурăнмалли условисене, ачана çемьене пурăнма илекен ашшĕ-амăшне ĕç вырăнĕнче тата ял-йыш мĕнле хакланине, вĕсен сывлăхĕ ачана çемьене пурăнма илме чармасть-и – çакна йăлтах шута илеççĕ. Судпа айăпланман-и тата? Айăпланнă пулсан, мĕнле статьяпа – çакна та тишкеретпĕр.

**– Чи малтан пурăнмалли условисем çинче чарăнарха. Ачана çемьене пурăнма илес тесен, мĕнле пулмалла вĕсем?**

– Пурнăç условийĕсем йĕркеллĕ пулмалла. Ачан уйрăм çывăрма кравать пултăр. Урок тумалли, харпăр хăй япалисене хумалли вырăн кирлĕ. Çакна та палăртмалла: ачана çемьене пурăнма илнĕ çемьене пурăнма илнĕ ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем хушшинче алимент тӳлес, харпăрлăха тĕпкĕче хăварас йĕрке пырса тивмест.

**– Камсем ачана çемьене пурăнма илме пултараççĕ?**

– Çул çитнĕ хĕрарăм е арçын та ачана çемьене пурăнма илме пултарать. Çаксемсĕр пуçне суд çынна пултарулăхсăр (недееспособный) тесе е пултарулăх енчен чикĕленĕ тесе йышăнсан, суд ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарма е чикĕлеме йышăннă пулсан, хăйсен тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаннипе опекун прависенчен хăтарнă пулсан. Малтан ачана усрава илсе, хăйсен айăпне пула суд усрава илнине пăрахăçланă пулсан та ачана çемьене пурăнма илме ирĕк памаççĕ. Ачана пăхма май паман чирпе (1, 2 ушкăн инваличĕсем те çак ушкăнах кĕреççĕ.) чирлесен те ачана çемьене пурăнма илесси пирки шутламалли çук.

**– Сăмах кунта чирсем çинчен те пулчĕ. Çĕр процентчĕпех сывă çынна паян тупма та йывăртарах пуль. Хăш чирсем пулсан ачана çемьене пурăнма илме пулмасть?**

– Çын туберкулезпа чирлесен. Çавăн пекех – шалти органсем, нерв системи, тĕревпе хускану аппарачĕсем чирленине пула вĕсем хăйсен функцийĕсене пурнăçлаймасан та çакăн пек арçынсемпе хĕрарăмсене ачана çемьене пурăнма памаççĕ. Çавăн пекех онкологи, наркомани, токсикомани, алкоголизм чирĕсемпе чирлесен те ачана çемьене пурăнма илме çук. Психика тĕлĕшĕнчи чирлисен те диспансери учетĕнчен тухиччен те ачана çемьене пурăнма илесси çинчен шухăшламалли çук. Çавăн пекех вăл е ку чир, сусăрăнни 1 тата 2 ушкăн инваличĕ патне илсе çитерчĕ, çавна пула ĕçлеме май çук пулсан та ачана çемьене пурăнма илме ирĕк памаççĕ.

**– Миçе ачана çемьене пурăнма илме юрать?**

– Ачана пурăнма илекен çемьере пĕтĕм ачасен йышĕ, хăйсен, усрава илнĕ ачасемпе пĕрле 8 ачаран иртмелле мар.

**– Ираида Семеновна, пирĕн районта ачана çемьене пурăнма илес кăмăллисем тата пур-и? Мĕнлерех çемьесем вĕсем?**

– Хальхи вăхăтра тепĕр 3 çемье ачасене çемьене пурăнма илме шутлаççĕ: ачасене суйлаççĕ. Камăн çемьере хĕр ача пур, вĕсем арçын ача илесшĕн е пачах урăхла. Хăшĕсен хăйсен ачисем çитĕнсе ура çине тăнă, вĕсем хăйсен пурнăçне ача сассипе пуянлатасшăн, пурăнма илнĕ ачана воспитани парассине халалласшăн малашнехи пурнăçне те.

Çакна палăртмалла, ачана воспитани парас ĕçре опыт пур пулсан, пĕччен пурăнакансене е кирек кама та, вĕсем çул çитнĕ пулсан, ачана пурăнма илме чăрмантаракан сăлтавсемпе çӳлерех асăннă категорисене кĕмеççĕ пулсан, тархасшăн, кашнинех хаваспах пулăшатпăр.

**– Мĕнле ачасене çемьене пурăнма илме юрать?**

– Ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă ачасене параççĕ çемьене пурăнма: тăлăх ачасене, ашшĕ-амăшĕ паллă мар ачасен, ашшĕ-амăш прависенчен хăтарнисен е çак правасене чикĕленисен ачисене параççĕ тепĕр çемьене. Çавăн пекех вĕсен йышне суд пултарулăхсăр (недееспособный) тесе йышăннă ашшĕ-амăшĕсен, суд хăйсем çинчен пĕлтермесĕр çухалса çӳреççĕ тесе йышăннă ашшĕ-амăшĕсен, судпа айăпланнисен ачисем те кĕреççĕ. Сывлăх япăххине кура хăйсен ачисене воспитани параймасан, вĕсен ачисене те урăх çемьене пурăнма илме пулать.

Ачана пурăнма илес текенсен кăмăл тата çакна валли условисем пулсан, хавшак сывлăхлă, кая юлса аталанакан тата пур енчен те пултарайман ачана та çемьене пурăнма илме юрать.

**– Ачана çемьене пурăнма илме кăмăл пулсан, ăçта каймалла çынсен?**

– Килĕр пирĕн пата. Пулăшатпăр. Ачана çемьене пурăнма илме кирлĕ документсене, заключение кунта хатĕрлетпĕр. Пирĕн районта паянхи куна хӳтлĕхсĕр юлнă ачасенчен вырнаçтарманнисем çук. Çавăнпа та хатĕр документсене республикăри интернат учрежденийĕсем пур вырăнсенчи опекăпа попечительсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен органсене хатĕрлесе ярса паратпăр.

Сăмаха вĕçлесе пынă май çакна тепĕр хут палăртсах калас килет: ачана çемьене пурăнма илес кăмăллисене хапăл тусах кĕтетпĕр. Кирек епле ачашăн та çемьерен хакли нимĕн те çук. Апла пулсан парнелеме ан ӳркенĕр çак телее ачасене. Çынна ырă туни ырăпах таврăнать вăл.

**– Тавах, Ираида Семеновна, калаçушăн. Районта ачана пурăнма илекен çемьесен, телейлĕ кулăллă ачасен йышĕ ӳссех пытăр.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

## Спорт хыпарĕсем

### Пăшалтан тĕл пересси пе

Майăн 2-мĕшĕнче Муркаш шкулĕн тирĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем хушшинче пăшалтан тĕл пересси пе районти ăмăрту иртет. Командăра 3 яшпа 2 хĕр тата 1 представитель пулмалла. СМ-2 винтовкăран пемелле. Дистанци – 25 метр, 6Б № мишень, выртса алă çинчен пемелле пулать. Призлă вырăн йышăннă командăсене дипломсем параççĕ.

### Çуллахи спорт сезонне уçнă ятпа

Майăн 1-мĕшĕнче çуллахи спорт сезонне уçнă ятпа çăмăл атлетика енĕпе районта мала тухса Муркаш райповĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăрту пулать. Вăл Муркашри тĕп площадьре иртет, 11 сехетре пуçланать. Унта шкулсен, ял хуçалăх предприятийĕсемпе организацисен тата учрежденисен командисем хутшăнаççĕ. Вăтам шкулсен командинче 10 çын (5 яш, 5 хĕр тата 1 представитель), пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен командинче 10 çын (5 яш, 5 хĕр тата 1 представитель), асслисен 6 çын (3 арçын, 3 хĕрарăм, 1 представитель) пулмалла. Участниксем хутăш эстафетăра ăмăртаççĕ. Яшсемпе хĕрсем те, арçынсемпе хĕрарăмсем те 1 километр чупаççĕ. Ăмăрту иртерессипе, çĕнтерӳçĕсене наградăлассипе тата апатлантарассипе çыхăннă тăкаксене Муркаш райповĕ хăйĕн çине илет.

Çавна та каласа хăвармалла. Йăлана кĕнĕ çак ăмăртăва Муркаш райповĕ кăçалхипе 5-мĕш хут йĕркелет.



## Пĕлтерӳсем. Объявления

Коммерческий банк «Объединенный банк Республики» (ООО) принимает депозитные вклады физических лиц в зависимости от срока и суммы вклада:

| Сумма вклада | 91 день | 180 дней | 365 дней |
|---|---|---|---|
| С 5000 руб. до 50000 руб. | 9% | 10% | 10,25% |
| С 50000 руб. и свыше | 10% | 10,25% | 10,5% |

Выплата процентов по вкладам на 91 день производится по истечении срока действия договора, по остальным вкладам – ежемесячно.

Продаем цемент М-400 50 кг, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид 15метровый. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».
Тел.: 8-903-346-40-58, 30-3-50. 4-5.

В УНИВЕРМАГЕ райцентра с. Моргауши открылся новый магазин ПРОДУКТОВЫЙ СУПЕРМАРКЕТ
- предлагается большой ассортимент продовольственных товаров;
- продажа товаров ведется методом самообслуживания;
- действует дисконтная скидка 3 % на все товары.
ПРИГЛАШАЕМ ПОСЕТИТЬ НАШ МАГАЗИН!

Муркаш ялĕнче тимĕр гараж, сарай тата пурăнмалли çурт лартмалла 33 сотка çĕр участокĕ, Тойкилтĕ ялĕнче вырăнта пурăнмалли çурт сутатăп.
Тел.: 8-927-865-21-98.

ООО «ИНСТАЛ СЕРВИС»
КАЧЕСТВЕННЫЕ, ДЕШЕВЫЕ КОМПЬЮТЕРЫ И ОРГТЕХНИКА
Продажа в кредит. Бесплатная доставка по Чувашской Республике. Индивидуальный подход к каждому клиенту.
КОМПЬЮТЕР И ЖК МОНИТОР 17 от 12000 руб.
г. Чебоксары, Московский проспект, д. 19, корпус 9.
Тел./факс(8352)45-90-34, 8-903-358-80-74.

В магазин «ВИЗИТ» срочно требуется бухгалтер (стаж работы, знание 1С).
Тел.: 2-18-34, 8-905-344-76-36.

ЗАО «МСО «Моргаушская» приглашает принять долевое участие в строительстве 36-и квартирного жилого дома в д. Москакасы Моргаушского района ЧР.
На постоянную работу в ЗАО «МСО «Моргаушская» требуются: электрогазосварщики, каменщики, плотники.
Контактный телефон: 2-21-29. 1-2.

Куплю плуг трехкорпусный, косилку, прицеп.
Тел.: 8-906-135-44-82.

Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, шифер, рубероид, доски. При покупке керамзитобетонных блоков на остальной товар скидки.
Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-851-47-82. 1-2.

Продаю КРН-2,1. Цена договорная.
Тел.: 8-927-862-94-13.

РУКОВОДИТЕЛЯМ ПРЕДПРИЯТИЙ, УЧРЕЖДЕНИЙ И НАСЕЛЕНИЮ
Общество с ограниченной ответственностью «Ручей» производит работы по монтажу, наладке и пуску эксплуатацию систем электроснабжения объектов любого назначения (жилые, производственные, соц. культ. быта и т. д.). Лицензия № Д535829 от 15 ноября 2004 г. выдан Федеральным агентством по строительству и жилищно-коммунальным хозяйством, а также выполняет полный комплекс испытаний и измерений электрооборудования и электроустановок напряжением до 1000В, а именно:
1. Измерение силы тока, напряжения и мощности в электрических цепях.
2. Испытание изоляции электрооборудования.
3. Наладка заземляющих устройств:
3.1. Измерения сопротивления растекания контура защитного заземления;
3.2. Проверка наличия цепи между заземлителями и заземляемыми элементами;
3.3. Замер полного сопротивления цепи «фаза-нуль-токоприемника».
4. Проверка работоспособности УЗО (ВКЗ) автоматических выключателей.


Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци коллективĕ кунта ветеринари лабораторийĕн директорĕ пулса ĕçленĕ М.В. Мясниковăн мăшăрĕ

**Валентина Порфирьевна МЯСНИКОВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Мăн Сĕнтĕрти больница коллективĕ больницăн тĕп тухтăрĕн хуçалăх енĕпе ĕçлекен çумĕн М.А. Мироваевăн амăшĕ

**Матрена Ивановна ИВАНОВА**

нумай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.


Кролик сутатăп.
Тел.: 8-927-850-18-92.

Сниму квартиру в с. Моргауши.
Тел.: 8-917-662-74-83.


Администрация Моргаушского района сообщает о наличии следующих свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства из земель сельскохозяйственного назначения, расположенных на территории Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

| № п-п | Месторасположение земельного участка | Кадастровый номер участка | Целевое назначение | Площадь кв. м. |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Участок находится примерно в 50 метрах по направлению на северо-восток от ориентира водонапорная башня, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, с. Тиуши, южная часть. | 21:17:28 07 02:0141 | Для ведения личного подсобного хозяйства | 6000 |

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 313, с 8-00 до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

**Хаçатăн çитес номерĕ майăн 5-мĕшĕнче тухать.**


ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 2,0 п. листа. Тираж 3506.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 27.04.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.